К83.39(=Чув)6-8
И85
Ч-43735

Ю. Сементер

Исмай ИСЕМПЕК

# ЧУНРА ХĔМЛЕННĔ ÇИÇĔМ




Шупашкар
2009

Национальная библиотека ЧР
4-043735

## ...иçӗм сапаки» кӗнекерен

Тавах, нуша: кулач чӗлли тыттартăн,
Тав, юрату: яш чунăма вăратрăн,
Тăшманăм, кил, сана та ал парам:
Мана эс тăп выртас çӗртен тăратрăн.

* * *

Шурăмпуçсем хăпариччен, малтан,
Мӗскер каласшăн-ши пире автан?
Автан пире каласшăн: «Эй, этем,
Ӗмрӳ иртсе пырать, часрах вăран!»

* * *

Ак укăлча... Салам, сар кайăк сачӗ,
Тесе пырса кӗреп тăван яла.
Кунта эп яшлăха тарэ парсаччӗ,
Паян... мӗнле илем-ши каялла?

* * *

Туссем çинчен илтеп хитре хыпар.
Çӗн кун, эс вӗсене пыл çеç хыптар.
Ман тилхепе тесен — ăна хытар,
Поэзири çăмăллăхран хăтар.

* * *

Эй, арçынсем! Шăрантăр ярăм-ярăм
Вăй-халăмăр кун-çул вучахӗнче,
Вара кăштах каçарăнӗ, тен, парăм
Тӗнче тытан хӗрарăм умӗнче.

**Юрий Сементер**

К 83.3Ч(Чув)6-8
И85

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ
ЧУВАШСКОЕ КНИЖНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
НОВЫЕ КНИГИ

**Исмай ИСЕМПЕК**

# ЧУНРА ХĔМЛЕННĔ ÇИÇĔМ

Шупашкар
2009

83.3(2Рос Чув)6-8 Сементер Ю, 45
Исемпек И.
К8339(Чув)6-8 Сементер Ю
ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

УДК 871.512.111

ББК 84 (2Рос=Чув)6-4

И85

**Исмай ИСЕМПЕК**

И85 ЧУНРА ХĔМЛЕННĔ ÇИÇĔМ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви. – 20 с.

Тĕпчев ĕçĕнче автор чăваш халăх поэчĕн Юрий Сементерĕн 2009 çулта пичетленсе тухнă "Çиçĕм сапаки" кĕнекинчи тăватшар йĕркеллĕ сăвăсене тишкернĕ.

Библиотекăра ĕçлекенсем, вĕрентекенсем, аспирантсемпе студентсем тата поэзие юратакансем валли.

Проверено 22 МАР 2017

И-43735

Национальная библиотека

**УДК 871.512.111**

**ББК 84 (2Рос=Чув)6-4**

© Исмай ИСЕМПЕК, 2009

# ÇУЛĂМ-ЙĔРĔМ



Эпĕ Чăваш Республикинчи Красноармейски районĕнчи Танăш ялĕнче 1941 çулхи кăрлач уйăхĕн 2-мĕшĕнче çуралнă.

Çĕрпӳри культурăпа çут ĕç шкулĕнче ятарлă вăтам, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче аслă филологи пĕлĕвĕ илнĕ.

Салтак хĕсметĕнче Германире (1960–1963) тата Атăлçи çар округĕнче политика ĕçĕнче (1969–1971) тăнă. Комсомолăн Çĕрпӳ райкомĕнче (1964–1966), Çĕрпӳ район хаçачĕн пай пуçлăхĕнче (1966–1969), Чăваш кĕнеке издательствин илемлĕ литература редакторĕнче (1971–1974), "Ялав" журналăн тĕп редакторĕнче (1974–2005) ĕçленĕ.

1973 çулта мана А. Алка, А. Эсхель, Г. Орлов сĕннипе СССР писательсен союзне илчĕç.

Тăван литературăра аллă çул ĕçлесе çирĕм ытла кĕнеке пичетлесе кăлартăм. Вĕсенчен хама "Йĕс шăн-

кăрав", "Хурапа шурă", "Хуркайăк çулĕ", "Çиçĕм сапаки" кĕнекесем ытларах килĕшеççĕ.

Чăваш композиторĕсемпе туслă пурăннă май юрă жанрĕнче чылай ĕçлеме тиврĕ. Г. Максимовăн "Телей кайăкĕ", "Аттила" оперисене, "Шур акăш" музыка комедине, Ф. Васильевăн "Вăрман ачисем" балетне çырнă çĕре хутшăнтăм.

Юрăсенчен "Уçланкăри палан" (кĕвви Ф. Лукинăн), "Кăмăл-туйăм" (кĕвви Г. Хирпӳн), "Килсе курăр хăнана" (кĕвви Г. Лебедевăн), "Ан кай, тăван" (кĕвви И. Аршиновăн), "Ăçта-ши халь çав çуркунне" (кĕвви Н. Карлинăн), "Малтанхи юратăвăм" (кĕвви Ю. Кудаковăн), "Шурăмпуç" (кĕвви Ю. Шепиловăн), "Тилĕ юртать" (кĕвви А. Никитинăн) тата ыттисем халăхра уйрăмах анлă сарăлчĕç.

Сăмах май, юрăсен пĕтĕмĕшле шучĕ пилĕк çĕр урлă каçса кайрĕ.

Куçару ĕçне те умри тивĕç вырăнне хурса туса пытăм. А. Пушкин, М. Лермонтов, С. Есенин, А. Твардовский, М. Джалиль, К. Крапива, Б. Олейник, Р. Харис тата ыттисем çырнисене, çавăн пекех театрсем валли тĕрлĕ чĕлхерен вун пилĕк пьеса чăвашла куçартăм.

Чăваш поэзине эпĕ тĕнчен тарăн философиллĕ, хăйне евĕрлĕ сăн-сăпатлă культура палăкĕ тесе шутлатăп, çав ĕненӳпе хавхаланса кунсеренех алла калем тытатăп. Чĕлхемĕре сума сăвакансем умĕнче пуçăма таятăп.

**Юрий СЕМЕНТЕР.**

2009 çулхи çĕртме уйăхĕ.

# ЧУНРА ХЁМЛЕННĔ ÇИÇĔМ

Пысăк калăпăшлă сăвăлла романсен тапхăрĕ иртсе пырать пулмалла: юлашки çулсенче Петĕр Хусанкайăн “Аптраман тавраш”, Ухсай Яккăвĕн “Ту урлă çулĕ” пек нумай кĕвĕллĕ те нумай çемĕллĕ хайлавсем ытлашши курăнсах каймарĕç. Акă поэзире çур ĕмĕре яхăн хăй çулĕпе утакан Сементер те, ку таранччен хайланă вун икĕ поэмине пĕр хуплашкапа кăларас тесе хатĕрленнĕскер, ал çырăвне вăхăтлăха умĕнчен сирсе хучĕ. Ун вырăнне вăл пире “Çиçĕм сапаки”* ятлă сăвă пуххи парнелерĕ.

“Сапаки те пулать-ши çиçĕмĕн?” – текен шухăш та вĕлтлетсе илчĕ малтанах пуçра, анчах аслати умĕнхи çиçĕм çыххи те, уявсенче кризисне-мĕнне пăхмасăрах çине-çинех яракан салютсемпе фейерверксен сапакисем те куç умне пайăррăн тухса тăчĕç те – иккĕленӳллĕ шухăш çиçĕм çиççе çухалнă пекех хăвăрт сирĕлчĕ.

Ку кĕнекере пĕтĕмпех тăватшар йĕркеллĕ сăвăсем. Тытăмĕ енчен пăхсан вĕсене тухăç поэзийĕнчи рубаи евĕрлĕ теме пулать: шухăшпа шухăш ытларах чухне е ыйтупа хурав майлă, е пĕр-пĕрне хирĕçлесе – тезăпа антитеза хурăмлă – йĕркеленсе пыраççĕ, састашĕсем те тĕпрен илсен *а а ă а* виçеллĕ ӳкерчĕксемпе çыхă-

* **Сементер Ю.С.** Çиçĕм сапаки: Сăвăсем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви. – 223 с. Редакторĕ В.Н. Алексеев. Художникĕ С.А. Бритвина. Тиражĕ 1000 экз.

наççĕ. Турра шĕкĕр, чăваш чĕлхин тĕлĕнсе каймалла пиçĕлĕхĕ ку çĕнĕлĕхе те кăмăллăнах йышăнать, эппин, сонетпа октавăна та, станспа рондона та хапăл тăвакан Çеçпĕл шкулĕ ку уйрăмлăха та çывăх курать. Чĕлхемĕре хисеплесе пуç таймалли сăлтавсем тупăнсах пыраççĕ иккен-ха.

"Европăшăн, Мускав Руçĕшĕн тухăç çĕрĕсем Пăлхар патшалăхĕ пулнă вырăнтан пуçланса каяççĕ", – тет поэт, хăйĕн хушма ятне те пиншер те пиншер çухрăма тăсăлнă аслă анат тĕнчинче – Сементер ятлă хулара – тупнăскер.

Унти "халăхсен сăмах пултарăвĕ пĕтĕм ӳнерлĕхе хăйне евĕрлĕ кăмăл-туйăмпа, сăнарлă шухăш эрешĕпе пуянлатса тăрать. Паян пирĕншĕн Рудаки, Саади, Хафиз, Омар Хайям, Навои, Фирдоуси тата ыттисен ячĕсем поэзи тӳпинчи чи çутă çăлтăрсемпе танах", – тет сăвăç кĕнекен "Тухăç йыхравĕ" ум сăмахĕнче.

Хальхи ăрури тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсен литературинчи ăстасене те манса хăварман поэтăмăр. Пĕр ӳсĕмри Абдулла Арипов узбекăн, Лоик Шерали таджикăн, Оразгулы Аннаев туркменăн, Равиль Бикбаев пушкăртăн, Равиль Файзуллинпа Ренат Харис тутарсен сăвви-юрри пысăк хака тивĕçекен пуянлăх пулнине палăртать. Хамăр сăвăççене те асра тытать Юрий Сементер. Тухăç туртăмĕсем чăваш поэзийĕнче те туллин палăрнине кăтартать вăл. Уйрăмах вĕсем Константин Ивановпа Николай Полоруссов – Шелепи, Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕ, Митта Ваçлейĕпе Ваçлей Давыдов-Анатри, Илле Тукташпа Валентин Урташ, Петĕр Эйзинпа Николай Исмуков, Ираида Петровăпа



*«Трак ен» ентешлĕхĕн хастарĕсем*



*А. Львов: «Пĕрлĕх – пирĕн пархатар!..»*



*Виçĕ пăхаттир*



*Андриян Николаев космонавт паллă ентешсемпе. Сулахайран сылтăмалла: В. Иванов, Г. Степанов, А. Архипов. Шупашкар. 2004 ç., утă*



*Ю. Сементер, В. Валем сăвăç (1947-2004), А. Львов*




*Ю. Сементерĕн 60 çулхи юбилейĕ ячĕпе ирттернĕ концертсенчен пĕринче. 2001 ç.*



*Сулахайран сылтăмалла: Николай, Владимир, Валерий Егоровсен кил-йышĕ – республикипе паллă династи*



***Икĕ салтак – Ю. Сементер, И. Григорьев***




***Еншик Чуллăра çуралса ÿснĕ Вячеслав Яковлев, Раççей Федерацийĕн Аслă сучĕн членĕ (сылтăмран виççĕмĕш), Красноармейскинчи Спорт керменĕнчи ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен ăмăртăвĕнче. 2007 ç.***



*В. Леонтьев юрăç «Ялав» журнал редакцийĕнче. 2004 ç.*



*А. Дмитриев, И. Григорьев, О. Алексеев, А. Николаев, А. Львов, К. Портнов, Ф.М. Лукин (1913-1994) композитор пурăннă çурт çинче Асăну хăмине уçнă вăхăтра*



***Черетлĕ пуху. Ю. Сементер, В. Прохоров, В. Львова, А. Львов, Т. Петрова, Г. Федоров, Г. Николаев***




***Ентешлĕх уявĕ. Малти ретре – А. Львов, С. Тимофеева***



*«Трак ен» ентешлĕхĕн правлени членĕсем: А. Яковлев, Ю. Яковлев, А. Львов, В. Егоров, Ю. Сементер. Шупашкар. 2005 ç.*



**Геннадий Федорова**

*Ентешлĕхре вăл хăвăрт ÿсрĕ:*
*Хамăр ретри ахаль çынран*
*Пулса тăрса «финанс министрĕ»*
*Савăнтарать пире паян.*

Любовь Мартьянова хайлавӗсенче тулли пучах пек курӑнса тӑраҫҫӗ.

Кӗнекери строфасене вулатӑн та аваллӑха тӗпе хурса шӑраннӑ сӑмахсем чӑваш ҫыннин паянхи шухӑшкӑмӑлне, пурнӑҫри туртӑмӗсене, туслӑхпа юратури ӑнлавӗсене сӑнлани, халӑхӑмӑрӑн авалхи тата хальхи йӑли-йӗркине философиллӗ куҫпа пӑхса пахалама ӑнтӑлни курӑнать.

Тӑватшар йӗркелӗхсем ача чухнехи кӑвайт умӗнчи выртмана, ҫар ҫыннисен йывӑрлӑхри ҫиҫӗмле шухӑшӗсене, ҫӗрпе пӗлӗтӗн пӗр тӗнчене пӗрлешекен ҫыхӑнӑвне чун шайӗнче тӗпчеҫҫӗ. Сӑмах май, поэт хӑй те лаша кӗтӗвӗ кӗтнӗ, салтакран офицера ҫити ӳснӗ, литература ӗҫӗнче нумай ҫул пиҫӗхсе ҫав шухӑшсене тӗшӗленӗ.

Юрий Сементер хӑйӗн пултарулӑхне салтак сӑввисенчен пуҫланӑччӗ. Хӑй вӑхӑтӗнче унӑн "Тупа" (1972), "Ҫӗр ҫаврӑнать" (1974), "Аван-и, салтак" (1981) кӗнекисенчи хайлавӗсем пирки вулакансем те, литература тӗпчевҫисем те сахал мар калаҫрӗҫ, ҫырчӗҫ.

1983 ҫулта ВЛКСМ Чӑваш обкомӗ поэта "Аван-и, салтакшӑн" республикӑри Ҫеҫпӗл Мишши ячӗллӗ премие памалла турӗ. Сӑвӑҫ ку темӑпа кайранхи ҫулсенче те сахал мар ӗҫлерӗ, ман шутпа, Тӑван ҫӗршыв хӳтӗлевҫисен шухӑш-кӑмӑлӗ ӑна паянхи кун та канӑҫ памасть: "Шӗнкрен" баллада, "Катюша", "Юлашки ҫул" поэмӑсем, сӑвӑ ярӑмӗсем, халӑхра анлӑ сарӑлнӑ юрӑсем ҫакна туллин ҫирӗплетеҫҫӗ.

Афган тата Чечня вӑрҫисене хутшӑннӑ ҫамрӑксен паттӑрлӑхне те сӑнарларӗ сӑвӑҫӑмӑр, ҫак хирӗҫӳсен сӑлтавӗсене те шӗкӗлчерӗ. Паллах, "Ҫиҫӗм сапаки"

кӗнекере те ку темӑпа ҫырнӑ йӗрке сахал мар:

***Ҫӗрле. Джелалабад таврашӗнче***
***Яш ӗмӗре душман шӗнкренӗ татрӗ.***
***Ылханлӑ пулӑм пӗтӗм ҫӗр ҫинче***
***Мӗнпур салтакӑн амӑшне вӑратрӗ.***

Пӗлтӗр Шупашкарта асӑннӑ вӑрҫӑсене хутшӑннӑ чӑваш каччисен паттӑрлӑхӗпе паллаштаракан "Живи и помни" кӗнеке пичетленсе тухрӗ. Салтаксен амӑшӗсем, тӑванӗсем, хӗр-тантӑшӗсем унта ҫырнӑ шухӑшсене вуласан, поэт каланӑ пек, ылханлӑ вут-ҫулӑм ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи ҫынсен кӑмӑлне пӑлхатса янине куҫӑн куратпӑр. Чӑнах та, мӗскер шырарӑмӑр-ши эпир Афган тӑвӗсенче, мӗскер суйларӑмӑр-ши ҫунтаракан хӗвел айӗнчи хӑйӑр хирӗсенче? Кунта шухӑшламалли ҫук мар.

Наци аталанӑвӗн паянхи шайӗ, умри малашлӑхӗ – поэтӑн ӗҫ йӗркинчи тӗп ыйтусем. Халӑхӑмӑр хушшинчи ҫыхӑну, ырӑпа усал хирӗҫӗвӗ, юратӑвӑн чӑвашла сӑнӗ-сӑпачӗ – ҫакӑ тата ытти тӗрлӗ тема поэта яланах ҫӗнӗлле тишкерӳ патнелле йыхӑраҫҫӗ, ҫӗнӗ сӑнарсем урлӑ ҫӗнӗ пӗтӗмлетӳ тума май параҫҫӗ.

Шухӑшпа чӗлхе ӳнерӗ пирки каланӑ сӑмахсем те хӑйне евӗрлӗн илтӗнеҫҫӗ кӗнекере. Ӑспа, чунпа пӗр кӳлӗмре вӗсем. Акӑ литературӑри хӑйӗн ӑрӑвӗ ҫине Митта пултарулӑхӗ витӗр пӑхса тӗвӗленнӗ йӗркесем:

***Йӑхташӑмсем! Миттамӑра пуҫ тайӑр.***
***Вӑл – сив кӗлрен ҫӗн хӗм кӑларнӑ Тайӑр.***
***Паян пире лекен пуҫ кӑшӑльсем –***
***Ун ячӗпе ешернӗ чӗрӗ лавр.***

Çапла вара Юрий Сементерĕн "Çиçĕм сапакин" тымарĕ ачалăхра, çĕршыв хуралĕнче, сирĕлсе сирĕлми шухăш сĕвемĕсенче вăй илнĕ...

Тĕрлĕрен туйăм çиçтерет поэзи çиçĕмне. Кĕнекере эпир чăвашлăх çавринчи çĕнĕ пулăмсене туятпăр, самана сывлăшĕнчи паянхи пĕлĕтсемпе тĕтресем патне те пырса тухатпăр, туслăхпа юрату пахчин халиччен лексе курман кĕтессине те кĕретпĕр, ырăпа усалăн ĕмĕрхи çырлаху-çураçусăр тытăçăвне те çакланатпăр. Илсе пăхар-ха çав тĕслĕхсенчен хăшне-пĕрне те пулин:

***Саккун калать: "Эп – сутăнми хăват".***
***Анчах ăна вуланă виç ваккат***
***Пĕр чăнлăха виç тĕрлĕ ăнланаççĕ...***
***Поэт, эс мар-и чунлăхлă тахат?***

Кунта сăвăçăмăр чунлăх пĕлтерĕшĕ пирки хăйĕн лирикăлла геройĕ мĕн шухăшланипе паллаштарать. Кĕскен, уçăмлăн, виçеллĕн:

***Çынна усалпала тавăракан –***
***Усал валли çĕн вăрлăх акакан.***
***Кам тарăхнă – килсемĕр ман пата, –***
***Эп – усала ырра çавăракан...***

Чăнах та, мĕн тери аван пулмалла тискеррĕн, кăтăрса кайичченех тарăхнă кашни çын, тăвăллă çумăр хыççăн хăй çыранне нихçан каялла кĕмесле туртăшаканскер, хăйне хăй мĕнле çураçтармаллине ăнланса илни. Чиркӳре-и унта, вĕрӳ-суруçă патĕнче-и, çут çанталăк ытамĕнче-и – пурпĕрех: этемĕн ырă енне çаврăнас кăмăлĕ тупăнни паха. Чунĕ çырлахтаруллă сăмах тĕлне пулинччĕ çеç.

Юрату çинчен сăвăçсем Гомертан пуçласа пирĕн са-



4-43735

манташсем таранччenех – çав тери нумай çырнă. Хамăр Хусанкай лирикин чăвашла çепĕçлĕхĕ, Тукташăн шăп халăхла шăратса кăларнă çаврисем, Урташăн кĕвĕленсе тăракан çĕкленӳлĕхĕ пĕтĕм чăваш чунĕнче пурăнаççĕ. Апла пулин те юрату асамлăхĕ, илемĕ, пархатарĕ çинчен паянхи шайпа калама Исмуков валли те, Афанасьев валли те, Сементер валли те çĕнĕ сăмах пур иккен:

***Çулатăп утă – шухăш сан çинче,***
***Юрлатăп юрă – шухăш сан çинче,***
***Тĕнче тени санран тăрать пуль , тусăм,***
***Мĕн-ма тесен – пур шухăш сан çинче.***

Çиелтен пăхсан ыттисем каланă шухăшах çĕкленĕн туйăнать пек Сементер, анчах кунта сăмах çаври те, шухăш çиçĕмĕ те, туйăм вылявĕ те – йăлтах хăйĕн, çак юхăма чунĕ витĕр кăлараканĕн. Эппин, юрату тĕнчи, уçлăх пекех, виçесĕр аслă.

Салтакăн çăлтăр витĕр курăнса выртакан çулĕйĕрĕ... Ашшĕсемпе ывăлĕсен хушшинчи тикĕс мар хутшăнăвĕсем... Тĕнчешĕн ку таранччenех аваллăх тымарĕсемпе те, чĕлхипе те, ӳнер вăрттăнлăхĕсемпе те салтăнми тĕвĕ пулса тăракан чăваш халăхĕн асамлă шăпи... Çак ыйтусене ирхи çил варкăшĕ пек хускатакан сăвăсен пуххи пире савăнтарчĕ, акă мĕнле пĕтĕмлетӳ патне илсе çитерчĕ: çунтаракан çиçĕм тӳпе хуралса килнĕ самантсенче сапакаланать.

“Çиçĕм сапаки” пирки калаçнă май ентеш сăвăçпа паянхи поэзи туртăмĕсем çине те çитрĕмĕр. Литературăри хăш ят ытларах шухăшлаттарать-ши Сементере, камсен сăвви-поэми хунав тымарĕ ярать-ши ун чунĕнче? Куратăп-ха, килти кĕнеке сентрисем çинче Навои,

Низами, Рудаки, Саади, Омар Хайям, Руставели, вĕсемпе юнашарах иртнĕ ĕмĕрти Хикмет, Вургун, Твардовский, Симонов, Исаев, Федоров, Луконин, Наровчатов томĕсем... Хамăрпа кӳршĕллĕ халăхсен сумлă ывăлĕхĕрĕн парнисен хушшинче – Файзуллин, Харис, Миннуллин тутарсем, Бикбаев, Аралбаев, Ганиева пушкăртсем, Николаев, Тимиркаев, Иванова çармăссем, ыттисем. Çакă хăйех поэт тĕнчин хăш-пĕр енĕсене уçса парать.

– Туртăм тени пĕр вырăнта тăмасть, çĕнелсе, вăйă карти пекех пысăкланса пырать, – терĕ поэт иксĕмĕр пултарулăх ыйтăвĕсем тавра калаçса ларнă хушăра. – Юлашки вăхăтра эпĕ украин поэчĕ Микола Винграновский çырнисене питĕ килĕштеретĕп. Унăн сăнар тумалли меслечĕсем, туйăм вăрттăнлăхне палăртмалли кĕввиçемми калама çук хăйне евĕрлĕ. Поэзи вăрман пекех нумай йывăçлă, çаран пекех нумай курăклă, симфони оркестрĕнче сĕрме купăссемпе пĕрле флейтăпа гобой та, кларнетпа саксофон та, литаврăпа параппан та кирлĕ пулнă пекех, вулакана баллада та, ода та, лирикăлла юрă та, çĕкленӳллĕ марш та, çепĕç туйăмлă серенадăпа баркарола та кирлĕ. Паян, ирĕклĕх алăкĕсем уçăлнă вăхăтра, пирĕн шухăшсемпе туйăмсен регистрĕ нумай хĕлĕхлĕ, нумай чĕлхеллĕ пулмалла...

Çакăн пек тĕллевсемпе ĕçлекен поэт пире çитес вăхăтрах жанр енчен те, форма тĕлĕшпе те çĕнĕ хайлавсемпе савăнтарасса шанас килет.

## Юрий Сементер чăвашла çырса кăларнă кĕнекесем

Тупа. 1972.

Çĕр çаврăнать. 1974.

Çамрăк турист. 1975.

Çĕршывăн хастар ачисем. 1976.

Шетмĕ шывĕ. 1977.

Ниме. 1979.

Аван-и, салтак. 1981.

Пирĕн вăйă карти. 1982, 2006.

Чĕнтĕрлĕ кĕпер. 1984.

Уçланкăри палан. 1987.

Йĕс шăнкărав. 1991.

Шетмĕ хумĕсем. 1991.

Автан мĕншĕн авăтать. 1994.

Халал. 1997.

Хурапа шурă. 1998.

Вуниккĕ. 2000.

Чăваш пики. 2002.

Хуркайăк çулĕ. 2002.

Çиçĕм сапаки. 2009.

Хушка. 2009.

Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă. 2009.

20.00

## Тупмалли

Юрий Сементер. Çулăм-йĕрĕм ....................................3
Чунра хĕмленнĕ çиçĕм ..................................................5
Юрий Сементер чăвашла çырса кăларнă кĕнекесем.....20

**Измай ИЗЕМБЕК**

**ЧУНРА ХĔМЛЕННĔ ÇИÇĔМ**
**МОЛНИЯ, РОЖДЕННАЯ В ДУШЕ**

*Автор в своих заметках размышляет о жанровом подходе к миниатюрным по объему, но глубоким по мысли четверостишиям народного поэта Чувашии Юрия Семендера, опубликованным в сборнике "Росчерк молнии", вышедшего в 2009 году в Чувашском книжном издательстве.*

*Для библиотечных работников, преподавателей, аспирантов, студентов и любителей поэзии.*

Редактор **А.П. Васильева (Иземби)**

Подписано к печати 21.07.09. Формат 60x84 $^1/_{16}$. Бумага офсетная.
Печать оперативная. Усл. печ. л. 0,75. Тираж 1000 экз.

# Сăмах хăвачĕ



Юрий Сементер – «Трак ен» ентешлĕхĕн чи хастар ĕҫченĕсенчен пĕри. Ăҫта кăна пулмарăмăр-ши эпир унпа: Чатукассинчи Филипп Лукин композитор музейĕнче, Кĕҫĕн Шетмĕ шкулĕнче, Яманакра, Еншик Чуллă тăрăхĕнче, Шывпуҫ Чуракассинче, Уписемпе Карайсенче... Поэтăмăра кашни ялтах пĕлеҫҫĕ. «Сементер килнĕ» тесессĕн чĕннĕ ҫĕре ҫиҫĕмле хăвăртлăхпа пухăнаҫҫĕ, калаҫăвне, сăвви-юррине каҫса кайса итлеҫҫĕ, хавхаланаҫҫĕ ентешĕмĕрсем.

«Мĕнпе илĕрттет-ши халăха унăн сăмахĕ?» — тесе часчасах шухăшлатăп эпĕ. Ахăртнех, хамăр ҫăл куҫсен шăнкăравлăхĕпе, уй-хирсен сулмаклă хумханăвĕпе, хамăр тăрăхри шăпчăксемпе сар кайăксен ҫепĕҫ юррисемпе пĕрлешсе каять пулмалла унăн поэзийĕ. Ҫавăнпа ăна ватти-вĕтти те, яш-кĕрĕм те хăйсен ӳсĕмĕнчи ҫын вырăнне хурса йышăнаҫҫĕ.

Акă ăҫта, акă мĕнре, ман шутпа, «Ҫиҫĕм сапакинчи» тăватйĕркелĕхсен халăхăмăр шухăшĕпе пĕрлешеслĕхĕ...

**Алексей ЛЬВОВ,**
**«Трак ен» ентешлĕх ертӳҫи.**